Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

104-105 (7635-7636) №№ ✻ Шӑмат кун, 2008 ҫулхи декабрӗн (раштав) 20-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

«Сывлӑх» наци проекчӗ

## Сывлӑхшӑн тӑрӑшасси малти вырӑнта



*Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан (сулахайран сылтӑмалла) Ираида Анатольевна Казаковапа Алина Петровна Чиновникова «Муркашри тӗп больница» муниципаллӑ сывату учрежденийӗн пуян опытлӑ тата халӑхра ырӑ ята тивӗҫнӗ ӗҫченӗсем. И. Казакова Шупашкарти медицина училищи хыҫҫӑн сывлӑх хуралӗнче 30 ҫул пулсан, 22 ҫулне районти тӗп больницӑн поликлиникин аслӑ медсестринче вӑй хурать. Унӑн мӑшӑрӗ Сергей Николаевич та районти тӗп больницӑра 30 ҫул шӑл техникӗ. Вӗсен хӗрӗ Татьяна Шарикова та 2005 ҫултанпа район больницинче эндокринолог пулса ӗҫлет.*

*– Шаларах кайсан ку династи пирӗн больницӑра чи пысӑккисенчен пӗри, – терӗ калаҫӑва хутшӑнса поликлиника пуҫлӑхӗ А. Чиновникова.*

*Алина Петровнан сывлӑх хуралӗнчи пӗтӗмӗшле ӗҫ стажӗ те вӑтӑр ҫул ытла. Чӑваш патшалӑх университетӗнче акушер-гинеколог специальноҫне алла илнӗскер, ҫак ӗҫпе вӑл Муркаш больницинче чӗрӗк ӗмӗре яхӑн вӑй хунӑ. Кунпа пӗрлех 7 ҫул больницӑн тӗп врачӗн сывату енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ пулса ӗҫленӗ.*

*– Пирӗн паянхи тӗп тивӗҫ – «Сывлӑх» наци проекчӗпе халӑх сывлӑхӗшӗн ӗҫлесси. Ырӑ улшӑнусем пур, анчах ҫанӑ тавӑрса ӗҫлесен вӗсем татах та пулмалла, – терӗҫ медиксем паянхи ҫамрӑксен те ӗҫлеслӗхӗ пысӑккине шута хурса.*

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

ЧР Президенчӗн Ҫырӑвне сӳтсе яватпӑр

## Чӑваш Ен ҫитӗнӗвӗ – кашнин пуҫарӑвӗнче

***Декабрӗн 16-мӗшӗнче Шупашкарта, Правительство ҫурчӗн Пысӑк залӗнче, Чӑваш Республикин тӑваттӑмӗш суйлаври Патшалӑх Канашӗн вун ҫиччӗмӗш сессийӗ иртрӗ. Сессин пӗрремӗш пайӗнче Чӑваш Республикин Президенчӗ Н.В. Федоров кӑҫал Патшалӑх Канашне янӑ «Чӑваш Ен ҫитӗнӗвӗ – кашнин пуҫарӑвӗнче» Ҫырупа тухса калаҫрӗ. Паянхи калаҫӑва хутшӑнакансене эпир ҫак Ҫыру пирки хӑйсен шухӑш-кӑмӑлне пӗлтерме ыйтрӑмӑр.***

**В. ДАНИЛОВ, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, районти тӗп больницӑн тӗп врачӗ:**

– Президентӑн Патшалӑх Канашне тата Чӑваш халӑхне янӑ Ҫырӑвӗ тӗнчери кризис тапхӑрӗпе пӗр килчӗ. Республика ертӳҫисем тӗрӗс политика тытса пынипе экономика аталанӑвӗнче кризисӑн тӳнтерле пулӑмӗсем сисӗнсех каймаҫҫӗ. Ҫырура Президент ЧР Министрсен Кабинетне тата Патшалӑх Канашне унччен палӑртнӑ стратегиллӗ ориентирсенчен пӑрӑнмалла марри пирки асӑнчӗ. Унччен йышӑннӑ пӗр программа та пурнӑҫланмасӑр юлмалла мар. Социаллӑ сферӑра палӑртнӑ ӗҫсем те пулса пырӗҫ.

Экономикӑн нумай сферисенче юлашки ҫулсенче ӳсӗмсем курӑмлӑ. Ҫырура палӑртнӑ тӑрӑх, ял хуҫалӑхӗ, строительство, пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство, промышленность енӗпе пулӑшу парасси малашне те палӑртнӑ виҫепех пулса пырӗ.

Президент йӑлари культура шайӗн, сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пырассин ыйтӑвӗсене те пысӑка хурать. Вӗсем малашне Чӑваш Ен аталанӑвӗн прогресӗн тӗп факторӗсем пулса тӑмалла.

Пӗр сӑмахпа каласан, Ҫырура республикӑра пурӑнакан кашни ҫын валлиех конкретлӑ задачӑсем палӑртнӑ. Вӗсене пурнӑҫласси шӗн кашниййӗнех ҫине тӑрас пулать. Республика пуласлӑхӗ пирӗнтен кашниййӗнчен килет.

**А. ИВАНОВ, «Единая Россия» партин Муркаш районӗнчи уйрӑмӗн политканашӗн секретарӗ:**

– Иртнӗ ҫулсенче ял хуҫалӑхне, промышленноҫа, строительствӑна аталантарассипе, ҫынсене социаллӑ пулӑшу парассипе йышӑннӑ пӗр программа та ӗҫлеме пӑрахмасть, мӗн палӑртнине пурнӑҫа кӗртес тӗллевсем улшӑнмаҫҫӗ тесе ҫирӗплетни хавхалантарать. Анчах та «ҫӳлтен» анчах кӗтсе ларсан, вырӑнсенче вӑр-вар ӗҫлеме пултараймасан, пурнӑҫ малалла аталанаймӗ тени те тӗрӗсех. Ҫитес ҫул – Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗнче – ял хуҫалӑх производствинчи нумай ыйтусене татса парасса шанас килет.

**В. ШАПОШНИКОВ калаҫнӑ.**

Пӗрлехи информаци кунӗнчен

## Кризиса пӑхмастпӑр – малаллах туртӑнатпӑр

Иртнӗ юн кун республикӑра Пӗрлехи информаци кунӗ иртрӗ. Ҫавна май пирӗн района Федераллӑ казначействӑн Чӑваш Республикинчи Управленийӗн ертӳҫи И.Н. Клюкова, Чӑваш Республикин Сывлӑх сыхлавӗн тата социаллӑ аталану министрӗн ҫумӗ Л.И. Рулькова, Чӑваш Республикин Шалти ӗҫсен министерствин обществӑлла хӑрушсӑрлӑх милицийӗн ертӳҫин ҫумӗ – милицин участокри уполномоченнӑйӗсен тата ҫул ҫитмен ҫамрӑксемпе ӗҫлекен подразделенисен ӗҫӗсене йӗркелекен пай пуҫлӑхӗ С.В. Наумов, Чӑвашпотребсоюз Канашӗн председателӗ В.М. Павлов килчӗҫ. Чи малтанах вӗсем район пуҫлӑхӗпе Ю.А. Ивановпа тӗл пулчӗҫ. Юрий Александрович вӗсене районӑн кӑҫалхи 11 уйӑхри социаллӑ-экономика аталанӑвӗпе паллаштарчӗ. Ҫывӑх вӑхӑтрах татса памалли ыйтусемпе умри задачӑсем ҫинче чарӑнчӗ.

Ун хыҫҫӑн вӗсем, 4 ушкӑна пайланса, район администрацийӗн яваплӑ ӗҫченӗсемпе пӗрле ял ҫыннисемпе, ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулчӗҫ. Хальхинче калаҫу Чӑваш Республикин Президенчӗн Н.В. Федоровӑн Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашне янӑ Ҫыру, Чӑваш Республикин Президенчӗн кӑҫалхи ноябрӗн 25-мӗшӗнчи 121-мӗш номерлӗ «Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗ ҫинчен» Указӗ, ҫавӑн пекех Чӑваш Республикин Президенчӗн 2002 ҫулхи декабрӗн 4-мӗшӗнчи 137-мӗш номерлӗ «Эрех-сӑра ӗҫессине, алкоголизмпа тата эрех-сӑрапа иртӗхессине хирӗҫ кӗрешмелли хушма мерӑсем ҫинчен» Указӗ епле пурнӑҫа кӗрсе пыни ҫинчен пулчӗ.

Район пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов, Федераллӑ казначействӑн Чӑваш Республикинчи Управленийӗн ертӳҫи И.Н. Клюкова, РФ Финанс министерствин федераллӑ казначействӑн Муркаш районӗнчи уйрӑмӗн ертӳҫи Н.В. Ланцев чи малтанах «Сеспель» акционерсен уҫӑ обществине ҫитсе килчӗҫ. Шел пулин те, тӗнчери финанс кризисӗ асӑннӑ предприятин заказчикӗсен ҫулне те пӳлсе хучӗ. Ҫавна май паян малтанхи пек 3 сменӑпа мар, 2 сменӑпа ӗҫлеҫҫӗ кунта. Сменӑра 50-шар ҫын ӗҫлет. Коллективра пӗтӗмпе те 200 ҫын. Предприятин тӗп инженерӗ В.А. Бирюков палӑртнӑ тӑрӑх, малтан вӑтам ӗҫ укҫи кунта 28-30 пин тенке ларнӑ пулсан, халь – 10-15 пин тенкӗ.

–Вӑхӑтлӑх ӗҫлемен рабочисене чи пӗчӗк ӗҫ укҫи чухлӗ тӳлесе тӑратпӑр, – тет вӑл.

Палӑртмалла, йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр асӑннӑ предприяти кӑҫалхи 11 уйӑхра иртнӗ ҫулхи ҫак вӑхӑтринчен 76,3 процент ытларах продукци кӑларса сутнӑ. Халӗ унта ҫӑнӑх, цемент турттармалли цистернӑсемсӗр пуҫне бензовозсем тӑваҫҫӗ. Заказсем те пур. Дисциплина вара кунта яланхи пекех ҫирӗп. «Сеспельте» ӗҫлес тесен эрех ӗҫмелле маррине пурте лайӑх пӗлеҫҫӗ.

**(Вӗҫӗ 2-мӗш стр.).**

Районта: ӗнер, паян, ыран

## Аш-какай, сӗт ытларах туса илнӗ

Выльӑх-чӗрлӗх отраслӗн вунпӗр уйӑх итогӗсене пӗтӗмлетнӗ. Иртнӗ тапхӑрта аш-какай 6716,1 тонна туса илнӗ. Ку вӑл иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан 102 процент пулать. Ял хуҫалӑх предприятийӗсенче аш-пӑш туса илесси 1942,3 тоннӑпа, уйрӑм ҫынсен хуҫалӑхӗсенче 4666,8 тоннӑпа, хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 108 тоннӑпа танлашнӑ.

Районӗпе сӗт 46493,7 тонна (иртнӗ ҫулхинчен 4,5 процент нумайрах) сӗт суса илнӗ. Вӑл шутран ял хуҫалӑх предприятийӗсенче 9192,5 тонна, уйрӑм ҫынсен хушма хуҫалӑхӗсенче 37183,1 тонна, хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче 118,1 тонна.

Районӗпе кашни ӗне пуҫне вӑтамран сӗт 4439 килограмм суса илнӗ. Самӑртма хупнӑ мӑйракаллӑ шултра выльӑхсем талӑкра вӑтамран 523 грамм, сыснасем 329 грамм ӳт хушнӑ. Отчетлӑ тапхӑрта пӗтӗмпе 2112 пӑру, 14234 ҫура илнӗ.

## ВИЧ-инфекцирен асӑрханӑр

Декабрӗн 17-мӗшӗнче районти тӗп больницӑра СПИДпа кӗрешекен тата профилактика енӗпе ӗҫлекен республикӑри центр специалисчӗсем консультаципе методика пулӑшӑвӗ парас ыйтусемпе пулчӗҫ. Больницӑра пулнӑ хыҫҫӑн вӗсем икӗ ушкӑна пайланса райцентрти пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулта тата Муркашри лицейре пулса унта вӗренекенсемпе тата вӗрентекенсемпе тӗл пулусем ирттерчӗҫ. Лицеистсем М. Гордеева инфекционист лекцийӗсене уйрӑмах килӗштерсе итлерӗҫ. Ҫакӑ паллӑ, пирӗн районта 5 ҫыннӑнне СПИД вирусне тупса палӑртнӑ. Апла пулсан ҫак чир хӑрушлӑхӗ пирӗнпе юнашарах ҫӳрет.

СПИД Центр специалисчӗсем тӗл пулусемпе кӑмӑллӑ юлчӗҫ.

## Грипп ҫывхарать

Чылай тӑнӑ ӑшӑ кунсем сивӗпе ылмашӑнчӗҫ. Хӗл пуҫланчӗ. Кунпа пӗрлех специалистсем грипп ҫывхарни пирки те калаҫаҫҫӗ. «Сывлӑх» наци проекчӗ ҫак чирпе кӗрешессине те малти вырӑна тӑратать. Ҫак кунсенче районти тӗп больницӑна гриппа кӗрешме 4340 доза вакцина килсе ҫитнӗ. Ӑна участоксенчи врачсене шкулта вӗренекенсене тата ача садне ҫӳрекенсене вакцинӑлама валеҫсе панӑ.

## Ҫӗнӗ ҫула – ҫӗнӗ ҫуртра

Федераллӑ тата республика шайӗнчи саккунсемпе программӑсем паян тӗрлӗ категори гражданӗсене ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатма майсем параҫҫӗ. Ҫапла Чӑваш Республикин «Ҫурт-йӗр хутшӑнӑвӗсен йӗрки ҫинчен» саккунӗпе килӗшӳллӗн 2008 ҫулта республика бюджетӗнчен Муркаш районне валли 278,8 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Район администрацийӗ консолидациленӗ бюджетран 621,1 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Декабрь уйӑхӗнче ҫак суммӑна администраци Москакасси ял тӑрӑхне куҫарнӑ. Вӑл укҫана ҫак ял тӑрӑхӗнчи пӗр тӑлӑх ача валли 899,8 пин тенкӗ тӑракан ҫурт-йӗр туянма янӑ.

2009 ҫулта асӑннӑ саккунпа килӗшӳллӗн пирӗн районта нумай ачаллӑ пӗр ҫемьен тата тепӗр икӗ тӑлӑх ачан ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатма палӑртнӑ.

**В. ШАПОШНИКОВ, А. БЕЛОВ, Н. НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.**

Саламлатпӑр

Сентимӗр ялӗнче пурӑнакан **Лидия Порфирьевна ЗАЙЦЕВАНА** 50 ҫул тултарнӑ ятпа пур кӑмӑлтан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Юбилей ячӗпе саламласа эпир ӑна вӑрӑм ӗмӗр, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу, лӑпкӑ пурнӑҫ сунатпӑр. Нумай ҫул ҫемйӳпе, тӑванусемпе савӑнса пурӑнмалла пултӑр.

**Пысӑк салампа: ашшӗпе амӑшӗ, аппӑшӗ, шӑллӗ, йӑмӑкӗсем.**

Хаклӑран та хаклӑ пирӗн чи ҫывӑх ҫынна – Шупуҫ ялӗнче пурӑнакан **Мария Афанасьевна МОСОЛОВАНА** 70 ҫул тултарнӑ ятпа ӑшӑ та ҫепӗҫ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, чун ӑшшине пире парнеленӗшӗн, йывӑр чухне пирӗн чун ыратӑвне хӑвӑн чӗрӳ витӗр кӑларнӑшӑн, пире юратса ҫитӗнтерсе тӗрӗс ҫул ҫине тӑратнӑшӑн. Юман пек ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм кун-ҫул, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал, лӑпкӑ пурнӑҫ сунатпӑр. Тайма пуҫ сана пуриншӗн те.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗпе кӗрӳшӗ, 2 мӑнукӗ, Ивановсем, Колбасовсем, тӑхлачи, Вазиковсем, Юртуковсем тата кӳршӗсем.**



Юратнӑ мӑшӑра, аннене, кӑмӑллӑ кукамая – Сентимӗр ялӗнче пурӑнакан **Лидия Порфирьевна ЗАЙЦЕВАНА** 50 ҫулхи юбилейпа саламлатпӑр. Вӑрӑм кун-ҫул, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал, тулли телей сунатпӑр. Эс пурришӗн савӑнатпӑр, хамӑра телейлӗ туятпӑр. Тавтапуҫ сана пуриншӗн те.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, 2 хӗрӗпе 2 кӗрӳшӗ, Сашӑпа Никита мӑнукӗсем.**

Сердечно поздравляю всех энергетиков Моргаушского района с наступающим праздником – День энергетика. Желаю крепкого здоровья, успехов в сложной и ответственной работе, семейного благополучия и всех земных благ.

**С поздравлением директор ООО «Энергосервис» П. Моисеев.**